**Константин Кольцов** 1916 çулхи çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Анат Сурăм ялĕнче йышлă хресчен çемйинче çуралнă. Ултă ывăл - Сантăр, Миняç, Хрисан, Павăл, Васлей, Кĕçтук, пĕр хĕр - Пăлаки. Çичĕ ачаран Кĕçтук - чи кĕçĕнни. Пулас поэтăн ашшĕ Михаил Семенов çĕре ир кĕнĕ. Çичĕ ачапа тарса юлнă мăшăрĕ Евдокия Захаровна тĕпренчĕкĕсене вĕрентессишĕн ырми-канми тăрăшнă.

Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн 12 çулти Кĕçтукăн сасартăк сывлăхĕ хавшама тытăннă. Районти çутĕç пайĕпе комсомол райкомĕ пулăшнипе шкул ачи Хура тинĕс хĕрринчи «Артек» лагерьте сипленнĕ. Лайăх вĕреннĕшĕн унта кайма тивĕçнĕ вăл. Чухăн çемьерен килнĕ çĕтĕк-çурăк тумланнă, çăпаталлă чăваш ачинчен тĕлĕннĕ ĕнтĕ - часах фотограф чĕнсе илнĕ... Унтан Кĕçтука ятуллă костюм тăхăнтартнă. Каярах вăл «Артек» çинчен çапла аса илнĕ: «Хура тинĕс хĕррипе чăваш ачисем чăвашла юрласа утаттăмăр».

Поэт фронта хăй ирĕкĕпе Шупашкартан кайнă. Вăрçă пуçлансан тепĕр кунхинех «Йытта йытă вилĕмĕ» сăвă шăрçаланă. Çав вăхăтрах вăл хаçатра пичетленнĕ.

Константин Михайловича «юраман» сăвăсем шăрçаланăшăн ирĕкрен хăтарассипе те хăратнă. Пĕр вăхăт вăл Çĕпĕре Василий пиччĕшĕ патне кайса пурăннă.

**Çырусем, çырусем ...**

Поэтан вăрçă хирĕнчен çырнă çырăвĕсене Аркадий Кольцов, вăл çĕре кĕрсен вара хĕрĕ Альвина Иванова упранă. Кăранташпа шăрçаланă пĕчĕк хутсем Аркадий Павлович пурăннă килти архивра упранаççĕ. Пичетленсе ĕлкĕреймен вун-вун сăвă... Вăхăт сарăхтарнă алçырăвĕсене тытса вуланăçемĕн поэт кăмăлне туятăн, унăн шухăшне ăнланатăн. Пурнăçа юратнине, тĕллевĕсене хаяр вăрçă татнине шурă хут çине куçарса чунне лăплантарнă вăл. Сăвăсен кашни йĕркинчех тарăн шухăш палăрать



**29-мĕш номерпе выртать...**

Салтак аттине тин кăна хывнă çамрăк поэт Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах алла пăшал тытнă. Тăшмана курайманни, пурнăç пилленĕ çĕре, тăван халăха юратни вĕри чĕреллĕ сăвăça хăйне хĕрхенмесĕр çапăçма хавхалантарнă. Вилĕмпе пĕрре мар куçа-куçăн тăнă чăваш каччи. Нимĕçсене Карели çĕрĕ çинче аркатнăскер Гитлер йыттисене нихăçан та парăнман. Аслă лейтенант салтаксене ялан тĕслĕх кăтартнă, çавăнпа ăна юлташĕсем хисепленĕ.

Çамрăк ăру, тен, Кĕçтук Кольцов ятне илтмен те. Унăн вăрçăри паттăрлăхĕ, тăнăçлă саманашăн пурнăçне шеллеменни, шăнкăр-шăнкăр шыв юххиллĕ сăввисем хисепе тивĕç.

Карели АССРĕн Лоухи районĕнчи Сосновка поселокĕнче тăванла масарта вичĕ пин ытла салтак канăç тупнă. Пирĕн ентешĕмĕр, çĕр-çĕр сăвă авторĕ, салтаксене чунпа ялан сывăх пулнă командир Константин Кольцов 29-мĕш номерпе выртать.

Сосновка шкулĕнче чăваш поэтне халаллană кĕтес пурри кама савăнтармасть-ши? Поселокра пĕр урама унăн ятне панă. Мĕн тери чыс пирĕн ентешĕмĕре.

Карелири çак поселокрах унăн сăвă йĕркисене гранит çине çырнă: «Юншăн - юн! Ирсĕр вилĕмшĕн - вилĕм! Малалла, тăшмана çĕнтерме!»




**Кĕçтук Кольцов музей уçăлнă.**

«Сăвăсем» /1963/, «Фронтра» /1979/ кĕнекесен /вĕсене поэт пурнăçран уйрăлнă хыççăн кăларнă/ авторăн кĕске ĕмĕрĕ иртнĕ çурта, Анат Сурăм ялĕнче, кивелнĕ пулин те, курма кăмăллă. Çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче, Константин Кольцов çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Ентешĕсем, тăванĕсем тăрăшнипе çак çуртра поэта хисеплесе музей уçнă. Çурта юсаса çĕнетме поэтăн тăванĕсем, ял-йыш укçа парса пулăшнă.

Анат Сурăмри чи вăрăм урам Кĕçтук Кольцов ячĕпе хисепленет. Вăл пурăннă, утса

сӳренĕ, çак урамри лаштра йăмрасен сывлăшĕпе киленнĕ, пĕрремĕш сăввисене шăрçаланă вырăнсем тăванĕсемшĕн кăна мар, çитĕнекен ăрушăн та чуна çывăх пулччăр.



Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пурнăçĕ ытла ир татăлнă поэт тăванĕсем, ял-йыш ăна паянхи кун çапла сума суни савăнтарать. Апла пулсан Кĕçтук Кольцовăн ячĕ вилĕмсĕр.





**Фронтра**

Паттăрсем вутпала çулăм витĕр

Улăпсем пек утаççĕ паян.
Ман çĕршывăн юрри те, кĕвви те
Аслатиллĕн кĕрлет ян та ян.

Халапри вун ик пуçлă çĕлен пек,
Сăнсăр, ирсĕр, хăрушă, тискер,
Сан юнна шерпет евĕр ĕçесшĕн
Урнă йытă, фашист тенĕскер.

Вăл эсрел пек, вăл — выçлăх та хурлăх,
Вăл мур хирнĕн çӳрет таврара;
Чечекри хуласем, хирсем урлă
Тимĕр сăнчăр хурса хăварать.

Пит телейлĕ çуралнă-мĕн эпĕр —
Çав ылханлă йăха çĕмĕрме.
Мăшкăл витнĕ масар хатĕрлетпĕр
Пытармашкăн фашист йăх-яхне.

Ирĕк илнĕ октябрь ялавĕ
Çĕнтерӳллĕн вĕçет паян кун.
Çавăнпа та евитлĕн калатпăр:
— Сая каймĕ эпир тăкнă юн.

Юншăн — юн! Ирсĕр вилĕмшĕн — вилĕм!
Вăй-хăват ӳсет, хурçă-тĕрек.
Асра пирĕн çĕршывăмăр пилĕ:
Малалла, тăшмана çĕмĕрер!

Информацийĕпе-библиографи пайĕ
E-mail: library@kanash.cap.ru
Тел. 8(83533)49-7-00

Канаш районĕн
"Централизациленĕ библиотекăсен системи"



# "Кĕçтук Кольцова - 100çул"

## (К. М. Кольцову - 100 лет)

Шăхасан сали,
2016ç.